*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

37 (2550) №
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2015
май çу 20
ЮНКУН

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ÇУРАКИ





# Уй-хире – савăк кăмăлпа

### Ака-суха, сĕт хакĕ...

Анлă уй-хирте тăрри сассине пӳлсе хăватлă техника кĕрлет. Çурхи кун çулталăклăх тенĕ. Ĕçченсем кашни сехечĕпе туллин усă курма тăрăшаççĕ. Иртен пуçласа каçченех ĕç шавĕ лăпланмасть.

– Çурхи культурăсене акса пĕтертĕмĕр ĕнтĕ, – паллаштарчĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Нива» хуçалăх ертӳçи Владимир Мурайкин. – Вĕсем 400 гектар ытла йышăнчĕç. Кукурус, пĕр тата нумай çул ӳсекен курăксем акмалли юлчĕ. Çĕрсем каярах пулса çитнипе ĕç-хĕл вăраха кайрĕ. Нумаях пулмасть шалкăм çумăр лаптăксене каллех йĕпетрĕ, ĕçлеймерĕмĕр.

«Нивăн» усă куракан çĕр 1550 гектар. Кăçал арканнă хуçалăхăн 350 гектарне пусă çаврăнăшне кĕртнĕ. Çавна май çурхи ĕçсен калăпăшĕ татах ӳснĕ.

Эпир çитнĕ тĕле мĕнпур техника Кивĕ Ирчемес çывăхĕнчи уйраччĕ. Икĕ агрегат нумай çул ӳсекен курăк акать. Юнашарти лаптăксенче çĕр хатĕрлеççĕ, кĕрхи культурăсене апатлантараççĕ. Хĕрӳ тапхăрта ĕçченсене хушса тӳлеççĕ. Вĕсене вĕри апат çитерессине йĕркеленĕ.

Ял çыннисене вара çураки кăна мар, сĕт хакĕ те канăç памасть. «Литрĕ 12 тенке çитрĕ. Мĕншĕн вĕçĕмсĕр чакса пырать-ши? – пăшăрханăвне пытармарĕç вĕсем. – Капла ĕне усрама кăмăл та юлмарĕ». Чăн та, çу енне, сĕт нумай чухне вăл яланах йӳнелни паллă. Анчах лавккари сĕт юр-варĕн хакĕ чакмасть-çке. Июльтен, сĕтшĕн пахалăхне кура татăлма тытăнсан, унăн хакĕ ӳсĕ-и?

Сăмах май, хуçалăх ял çыннисене выльăх апачĕ, тырă хăй хакĕпе парать. Çавăнпа Мучикасси тăрăхĕнче икшер-виçшер ĕне тытакансем пайтах. Сĕт йӳнелсе кайни картишне пушатса хăвармĕ-и?

### Çилпе вĕçтернĕ укçа

Николай Лисаев фермер хуçалăхĕн уйĕсем халĕ те типсе çитеймен-ха. Вырăн-вырăнпа çĕр путсах ларать.

– Ĕçе хăвăртлатма йĕперех лаптăксене те кĕрсе пăхрăмăр, анчах техникăна ватрăмăр çеç. Мĕн тăвăн, кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ, – терĕ фермер.

Хуçалăхне йĕркелесе янăранпа виççĕмĕш çул ĕнтĕ. Çак тапхăрта усă куракан çĕр 1,5 пин гектара çитнĕ. Халĕ Паньтăк çывăхĕнчи уйра тулă акаççĕ.

– Çанталăк типĕ тăрсан çывăх вăхăтра пĕтермеллех, – теççĕ çынсем.

Николай Лисаев панкрута тухнă хуçалăхăн хранилищине илсе пĕлтĕр кайăккĕшĕк ĕрчетме тытăннă. Халĕ унта 21 пин чăх чĕппи. Ăна Мускав облаçĕнчи ятарлă предприятирен туяннă. Уйăха çитсен ял çыннисене сутма тытăнасшăн. «Пушаннă витене кăркка, хур чĕпписемпе тултарăпăр», – пĕлтерчĕ вăл.

Хуçалăхра укçа-тенкĕ ĕçлесе илмелли мĕнпур мелпе усă курма тăрăшаççĕ. Анчах тăкакĕ те ӳссех пырать, чăрмавĕ те тупăнсах тăрать. Кăçал фермер ултавçăсен капкăнне çакланса 900 пин тенкĕ «çилпе вĕçтернĕ». Укçана Мускаври «Тайфун» фирмăна удобренишĕн куçарса панă. Пайтаçăсем вара таварне те паман, укçине те тавăрман.

– Ферма çуккипе, тырă типĕтмелли оборудовани хута ярайманнипе уй-хирте туса илни йӳнĕ хакпах каять, – пăшăрханса каласа пачĕ Николай Иванович. – Тăкаксене саплаштарма йывăртарах.

Кашни пусĕшĕн çичĕ хут тар тăкмалла. Пысăк кредит та çĕклеме йывăрлатать. Ферма тума проект тăратнине пĕлтерчĕ вăл. Сĕт хакла каймасан та ăна сутса кассăна куллен укçа кĕрет. Ӳсен-тăранпа ĕçленипе кăна аталанма йывăр çав.

### «Хамăртан килет»

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Коминтерн» ăнăçлă ĕçлесе пыракан хуçалăхсенчен пĕри. Унăн усă куракан çĕр лаптăкĕсем те самай. Çавăнпа ĕçченсен алă усса ларма вăхăт çук. Акă Ишекасси çывăхĕнчи уя Юрий Татаров механизатор ир-ирех çĕр акма хатĕрлет. Хыççăнах вара урпа акаççĕ.

2-мĕш стр. ➔





Л. Никитина сăнӳкерчĕкĕсем

КĔСКЕН

### Вăрттăн тӳлес йăларан хăпасчĕ

Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Татьяна Богданова пĕлтернĕ тăрăх – майăн 10-мĕшĕ тĕлне 18 районпа хулара ĕç саккунне пăснă тĕслĕх тупса палăртнă. 3713 çынна ĕçлеттернĕ, анчах хутшăнусене официаллă килĕшӳпе çирĕплетмен. 552 çынпа кăна ĕç килĕшĕвĕ хатĕрленĕ. Хăшпĕр районсенче (Патăрьел, Йĕпреç, Канаш, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă, Етĕрне тăрăхĕсенче тата Улатăр хулинче) вăрттăн ĕçлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те туман темелле.

Кăçалтан пуçласа министерство ĕçпе тивĕçтерекенпе килĕшӳ тумасăр вăй хуракан çынсен шутне чакарас тĕлĕшпе кашни вунă кунта тĕрĕслев ирттерет. Çакăн тĕллевĕ – вăрттăн ĕçлекенсене тупса палăртса патшалăхăн бюджета кĕмен фондне каякан укçа суммине ӳстересси, шалăва конвертпа тӳлес йăлана пăрахăçласси. Ку ĕçе вăйлатма Раççейри Ĕç министерствипе Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ апрель уйăхĕнче ятарлă килĕшӳ тунă. Ун тăрăх вăрттăн ĕçлекенсен шутне 48633 çын таран чакармалла (кăçалхи пĕрремĕш çур çул вĕçленичченчен). Республика ертӳçи Михаил Игнатьев ку ĕçе вăйлатмаллине асаилтернĕ. Ĕç саккунне пăснă тĕслĕхсем çинчен граждансем республика прокуратурине, патшалăхăн ĕç инспекцине тата налук службине хăйсен ятне палăртмасăр та шăнкăравласа пĕлтерме пултараççĕ.

### Ачасен пĕрремĕш форумĕ

Майăн 16-17-мĕшĕсенче "Лесная сказка" санаторире "Ачасем! Чăваш Ен! Пуласлăх!" ятпа республикăри ачапăчан пĕрремĕш форумĕ иртнĕ. Унта хутшăннисем пĕчĕк граждансен ыйтăвĕсене "çавра сĕтел" хушшинче сӳтсе явнă. Хăрушсăр интернетпа, çул çитменнисем хушшинче йĕркене пăснă тĕслĕхсемпе, аслисемпе ачасен хутшăнăвĕсемпе çыхăннисем уйрăмах çивĕч тăнă.

### "Çавра сĕтел" ĕçне хутшăннă

Иртнĕ эрнере Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Атăл бассейнĕн экологи тĕлĕшĕнчи хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă çивĕч ыйтусемпе йĕркеленĕ "çавра сĕтел" ĕçне хутшăннă. Вăл Хусанта иртнĕ, унта 15 регион представителĕ хутшăннă.

Кӳршĕ регионсемпе танлаштарсан Чăваш Енре таса мар шыв Атăла сахал варалать. Кӳршĕри Чулхула облаçĕнчех ку кăтарту 8 хут пысăк тата ытти те.

"Çавра сĕтел" хушшине ларнисем экологи ыйтăвĕсене татса пама татăклă сĕнӳсем хатĕрленĕ. Вĕсенчен чи пĕлтерĕшли Атăл шывне экологи тĕлĕшĕнчен "сыватма" федераци шайĕнче тĕллевлĕ программа йышăнассипе çыхăннă. Мероприяти вĕçĕнче Михаил Игнатьев журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă.

## Кăçал – тăвата çĕнĕ программа

Чăваш Республикин экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илӳ министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Инна Антонова 2016 çулта (çавăн пекех планланă 2017 тата 2018 çулсенче) республика хыснинчен финанслама сĕнекен патшалăх программисемпе паллаштарнă. Унта паянхи кун республикăра пурнăçланакан 15 програма (101 хушма кăларăмпа) кĕнĕ. Иртнĕ çул кăтартăвĕ тăрăх – вĕсенчен 10-шĕ питех те, 5-ĕшĕ – тухăçлă шутланнă. Кăçал 4 çĕнĕ программа хутшăннă. Вĕсем усă çĕр çинче тата теплицăсенче пахчаçимĕç ӳстересси, çĕрулми вăрлăхне ӳстерсе хатĕрлессипе, сĕтлĕ выльăх самăртассипе, акма паха вăрлăх туса илес ĕçре пулăшассипе тата хальччен ют çĕршывран турттарнă тавара хамăр патра туса кăларассипе çыхăннă.

## Пĕлтĕрхинчен ытларах

Чăвашстат кăтартăвĕ тăрăх – кăçалхи тăватă уйăхра республикăра 152,5 пин тăваткал метр çурт-йĕр тунă. Пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан хута янă лаптăк 42,7 процент ӳснĕ. Пĕтĕмĕшле лаптăкран 36912 тăваткал метр уйрăм çынсен шучĕпе çĕкленнĕ. Ялта тунă çуртйĕр лаптăкĕ 24905 тăваткал метрпа танлашнă.

## Эмблемăна çирĕплетнĕ

«Пĕтĕм Раççейри ялхуçалăх çыравĕ çинчен» саккунпа килĕшӳллĕн пирĕн çĕршывра ялхуçалăх çыравне вунă çулта пĕр хутран кая мар ирттермелле.

2016 çулхи çырав çĕр ресурсне, унпа тухăçлă усă курнине, выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк хисепне, çĕр ĕçченĕсем пирки (çынсен йышĕ, ӳсĕм çулĕ, пĕлӳ шайĕ), ял инфраструктурин лару-тăрăвне (такăр çул, электроэнерги, таса шыв, ăшă), ялхуçалăх техники, машина, оборудовани, производство çурчĕсем пуррине тĕплĕн пĕлме май парать.

Паллă мероприяти аграри секторĕнче тар тăкакан миллион çынна пырса тивет. Çав шутра ялта хушма хуçалăх тытакансене, дача, сад пĕрлĕхĕсенче тăракансене те.

Росстат Пĕтĕм тĕнчери ялхуçалăх çыравне хатĕрленсе ятарлă эмблема çирĕплетнĕ. Вăл официаллă символ шутланать. Эмблема çыравпа çыхăннă хатĕрсене илемлетĕ.

Чăваш Енре пĕлтерĕшлĕ мероприятие хатĕрлеме пуçланă ĕнтĕ. Çырав ирттерме кирлĕ нормативпа право никĕсне тăваççĕ, список йĕркелеççĕ, шута илмелли объектсемпе информаци пухаççĕ.

Çырав кăтартăвĕсем агропромышленноç комплексĕнчи лару-тăрăва туллин уççа пама, çĕршывра аграри политикине пĕлсе йĕркелеме пулăшать.

### Çĕр ĕçченĕ

**Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шĕнерпуçĕнче пурăнакан Леонид Альбертович Архиповăн висĕ ывăл. Асли хулара ĕçлесе пăхнă хыççăн тăван яла таврăннă. Çĕре, висесĕр уй-хире кăмăллакан çамрăка хулара хĕсĕк те тăвăр туйăннă. Тата унти пурнăç хăйне улăштарасран шикленнĕ. "Пирĕн пек çемçе кăмăллисем валли мар ĕç вырăнĕ. Пăсăлса та кайăп", – тенĕ те ялта юласси çинчен пĕлтернĕ. Паянхи пурнăçпа япăх мар ĕçе (çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăха тытса пырассипе çыхăннăскере) пăрахнăшăн ашшĕ урлă пулнă тетĕр-и? Çук, ывăлĕн шухăшĕпе килĕшнĕ. "Мĕншĕн вăрçмалла? Хĕпĕртемелле çеç. Пулăшма яла таврăнать. Мана лайăх вĕт", – тет вăл паян.**



# Çамрăка упрать, çемьене тăрантарать

Леонид Альбертовичăн, фермер хуçалăхĕ йĕркеленĕ май, ĕç тупăнсах тăрать темелле. Темĕн тума та ĕлкĕрмелле. Пуçра çĕр тĕрлĕ шухăш, тĕллевсем, ĕмĕтсем... Ара, пĕлтĕр кăна фермер статусне илнĕ вăл. Унччен кун пирки пач шухăшламан, тĕлĕкре те тĕлленмен. Вырăнти ял тăрăхĕн пуçлăхĕ пĕлтĕрхи январь уйăхĕнче Архиповсене тин çеç ĕçе пуçăнакан фермерсене патшалăх курăмлă пулăшу пани çинчен каланă, тĕллевлĕ программăпа тĕплĕнрех паллашма сĕннĕ. Мĕн тетĕн – çемьене çакă кăсăклантарнă. "Конкурсра çĕнтерейменсен те темех мар. Нимĕн те çухатмастпăр", – шухăшланă кил хуçи. Хушма хуçалăхра Архиповсем выльăх унччен те йышлă усранă, 9 пуç сăвакан ĕне, пăрусем тата ытти те пулнă. Тĕплĕ бизнес-план туса конкурс витĕр ăнăçлă тухнă, патшалăх грантне тивĕçнĕ.

Унпа фермер çĕнĕ трактор тата утă преслемалли хатĕр туяннă. Грант укçи çакна валли çитет кăна мар, ытлашши те юлать тенĕ конкурса тăратма кирлĕ документсем хатĕрленĕ чухне. Ара, вăл вăхăтра трактор çур миллион тенкĕ тăнă. Хак пĕр вырăнта тăмасть çав, шав малаллах "чупать". Алла грант укçи илнĕ тĕле трактор хакĕ 700 пин тенкĕне çитнĕ. "Кăçал миллионран та иртрĕ пулас", – тет Леонид Альбертович.

Патшалăх пулăшнипе вăл кăмăллă. Килти хуçалăхра кивĕ трактор пулнă-ха, анчах çĕннин хăвачĕ самай пысăк. Иртнĕ эрнере фермер унпа сĕлĕ уйне дисклаха сӳрелетчĕ. Республикăн кăнтăр районĕсемпе танлаштарсан Сĕнтĕрвăрри тăрăхĕнче çĕр хăвăрт пиçсе çитмест. Çавăнпа тинтерех кăна пулса çитнĕ çĕр çине Леонид Архипов сĕлĕ акса хăварма васкатчĕ. "Мĕншĕн сĕлле ытларах кăмăллатăр? Ăна акса ӳстерекен хуçалăхсене паян сайра тĕл пулатăн", – кăсăкланатăп фермертан. "Выльăха ыраша е урпана уйрăммăн авăртса параймастăн. Сĕлĕпе капла апатлама пулать. Ку культура вăйлă тухăç парать, урпа пек лутра çитĕнмест, вырса илме меллĕ. Ăна çумкурăк та ытла пусмасть. Вăйлă çил чухне сĕлĕ, паллах, выртма пултарать. Çакă хăратать. Çĕр ĕçĕ çав тери кăсăклă, анчах хăрушлăхĕ те юнашарах çӳрет", – ăнлантарать арçын.

30 га сĕлĕ акма çĕре вăл йывăç кăкласа хатĕрленĕ. Шĕнерпуç таврашĕнче чылай çул усă курман лаптăк йышлă. Вĕсем çинче вăрман кашлама тытăннă.

Фермерăн хальлĕхе утă çулса илмелли çĕр лаптăкĕ те пысăк мар – 6 га кăна. 34 чун выльăх (вĕсенчен 15-ĕшĕ сăвакан ĕне) валли утта вăл ялтан 20 çухрăмра вырнаçнă тăрăхра хатĕрлет. Унта пурăнакан пĕччен ватăсен çĕр лаптăкĕсенчи курăка çулать. Çулнă хыççăн пĕр пайне кил хуçисем валли хăварать, ыттине хăйĕн патне турттарать. Кăçал та çаплах нушаланса тăкакланма тивет унăн. 20 га çинче акнă люцерна тепĕр çулсăр тухăç памасть.

Патшалăхпа район администрацийĕ хавхалантарнăран Леонид Альбертович пуça усмасть, фермер ĕçне пуçăннишĕн ӳкĕнмест. Ялхуçалăх ĕçĕпе вăл 1979 çултанпах туслă, ĕмĕр тăршшĕпе хуçалăхра механикре, водительте тăрăшнă. Тин çеç çĕнĕ йыша кĕнĕ фермера аслисем, чылай çул ĕçлекенсем, сĕнӳ-канашпа, техникăпа пулăшаççĕ. Ара, сĕлле вырса илме Леонид Архиповăн хальлĕхе комбайн çук-çке. Ку тĕлĕшпе ĕçтешĕ Валерий Плотников пулăшать. Тепĕр 2-3 çултан çемье ферми йĕркелесе ярса патшалăхăн тата сумлăрах гранчĕсен тупăшăва тухмашкăн шухăш та пур. Комбайн туянас тĕллев канăç памасть арçынна.

Парăма тӳлесе татасси шиклентермест. Ку таранччен кредитпа пайтах усă курнă, парăмра юлман. Ак часах фермера курттăмăн пысăк укçа кирлĕ пулать. 34 пуç выльăха вăл вырăнти ялхуçалăх кооперативĕн ферминче усрать. Арендăна илнĕ витен пĕр пайне уксалла туянса хăйĕн харпăрлăхĕ тăвасшăн. Каллех банка кивçене кĕмелле.

Малалла аталанасшăн çунсан ирĕксĕрех çапла тума тивет. Кашни утăм кăсăклă халĕ Леонид Альбертовичшăн. Аслă ывăлĕ – çумра, кунсерен пулăшать. Вăталăххи хулара пурăнать, анчах тăтăшах яла çӳрет. Вăл та çĕртен уйрăласшăн мар. Пĕлтĕр 20 гектар илсе унта пахчаçимĕç ӳстерме тытăннă. Кăçал ытларах севок туса илме вăрлăх акнă. Çамрăк хăй çĕр çинче ĕçлеме пултарнине тĕрĕслет. Леонид Архиповăн кĕçĕн ывăлĕ хальлĕхе техникумра ăс пухать, йĕлтĕр спорчĕпе туслă. Часах çар хĕсметне каймалла. Салтакра та спорт ротине лекесшĕн. Тен, унтан таврăнсан вăл та мана çĕр кирлĕ тейĕ. Пурнăç кунран кун улшăнать вĕт. "Топливо хакне йӳнетсен, сĕтĕнне ӳстерсен пире нимĕн те кирлĕ мар. Ыттине эпир йăлт хамăр тăватпăр", – тет фермер.

Хăйне те, ыттисене те лайăх тăвассишĕн ĕçлет чăваш хресченĕ. Ир вăранать те ывăлĕпе пĕрле 15 ĕнене сума фермăна çул тытать. Пĕчĕк те çăмăл аппаратпа усă курса суса пĕтереççĕ. Çутă çук е техника ваннă чухне алăпа та сума тивет. Леонид Альбертович арăмне выльăх патне ямасть. Лешĕ темĕн пек ӳкетлет. "Çук, кил-çуртра кăштăрткаласа çӳре, апат пĕçер, выльăха хамăрах пăхатпăр", – теççĕ упăшкипе ывăлĕ. Хăй вăхăтĕнче 8-9 ĕне суса сывлăхне хавшатнă хыççăн пульницана лекнĕ мăшăрне упрать кил хуçи, 5 килограмран ытла йывăр çĕклем йăттармасть.

Çак сăмахсене вăл питех те çирĕппĕн каларĕ. Выльăх йышĕ 50 пуçа çитсен те (конкурса тăратнă бизнес-планпа çак шута çитермелле) арçынсем ĕнесене хăйсемех суса пурăнасса ĕнентĕм эпĕ.

**Ирина НИКИТИНА.**

# Уй-хире – савăк кăмăлпа

🡐 1-мĕш стр.

– Çурхи ĕçсене палăртнин 70 процентне яхăн пурнăçланă. Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене 700 гектара яхăн акнă, – каласа пачĕ хуçалăхăн тĕп агрономĕ Николай Воронов.

– Çуракине çулсеренех кăнтăр енчи районсенчен вунă кун каярах юлса тухатпăр. Ку çĕр пулса çитейменнипе çыхăннă. Кăçал çурхи ĕçсене 5012 гектар çинче туса ирттермелле. Çав шутра пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсем 3665 гектар йышăнмалла, çĕрулми – 18. Çурхи ĕçсене вĕçлесе пыратпăр ĕнтĕ.

Районта чылай хуçалăх арканнă май усă курмасăр выртакан çĕр 5 пин гектар ытла. Икĕ çулта ăна йăлтах пусă çаврăнăшне кĕртесшĕн. Çуракинче пĕлтĕрхинчен пĕр пин гектар ытларах сухалама-акма тиврĕ. Кăçал районта çичĕ фермер хуçалăхĕ йĕркеленчĕ. Вĕсене те çĕр уйăрса парасшăн, – терĕ Хĕрлĕ Чутай район администрацийĕн ялхуçалăх пайĕн пуçлăхĕ Владимир Храмов.

Етĕрне районĕнчи «Заветы Ильича» хуçалăхра çурхисене акса пĕтернĕ ĕнтĕ. Халĕ хĕрсех çĕрулми лартаççĕ. Унăн лаптăкне иртнĕ çулхинчен пысăклатнă. Çакă çĕрулми хакланнипе те çыхăннă.

– Çынсем тăрăшса ĕçлеççĕ, техника юсавлă, вăрлăх, удобрени çителĕклĕ. Акасуха мĕнле иртесси йăлтах хамăртан килет, – терĕ Владимир Иванов ертӳçĕ.

Кăçал çурхи ĕçсем пĕлтĕрхинчен самай хакларах ларнине пăшăрханса пĕлтерчĕ вăл. Çакă саппас пайĕсем, удобрени, ГСМ, техника хакланнипе çыхăннă.

«Çав хушăрах сĕт йӳнелчĕ, литрне 16 тенкĕпе илеççĕ. Пĕлтĕр çак вăхăт тĕлне 18 тенкĕпе сутнă. 310 ĕнерен куллен мĕн чухлĕ укçа çухататпăр», – хаш сывларĕ ертӳçĕ. Хуçалăхра уй-хирте ĕçлекенсем пур-ха, анчах фермăра çитмеççĕ вĕсем. «Шалăвне те тӳлетпĕр, çук, ĕçлесшĕн мар», – тет Владимир Иванов.

– Республикăра çурхи культурăсене акса пĕтернĕпе пĕрех. Палăртнин 92,1 процентне пурнăçланă, – терĕ районсене ĕçлĕ çулçӳревпе çитнĕ ЧР ялхуçалăх министрĕ Сергей Павлов. – Тĕп тĕллев – çурхи ĕçсене вăраха ямасăр вĕçлесси. Çынсен ĕçлес кăмăлĕ пысăк, апла палăртнине пурнăçлатпăрах.

**КĔСКЕН.** Майăн 18-мĕшĕ тĕлне республикăра пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене 182 603 гектар акнă (92, 1 процент). Патăрьел, Комсомольски, Елчĕк районĕсенче ку ĕçе вĕçленĕ. Çĕрулми – 5 146 (41,6 процент), пахчаçимĕç 461 гектар акнă-лартнă.

**Лариса АРСЕНТЬЕВА.**

## Вулакансем çыраççĕ

◆ ТИМСĔРЛĔХ

# Çирĕп ыйтсан йĕрке пулатех

Комсомольски районĕнчи Аслă Çĕрпÿелĕнчи ял хушшинчи пĕвене хута янăранпа аллă çул та çитсе пырать. Ытлашши шыва юхтарса кăлармалли шахта вăхăт иртнĕçемĕн вăйсăрланчĕ пулас, юлашки çулсенче пĕвери шыв шайĕ самаях чакни палăратчĕ. Кăçал "Восход" пĕрлешÿ ертÿçи Е. Рябчиков тата Д. Любимов тăрăшнипе хĕллехи вăхăтрах бетон ярса шахтăн çÿлти пайне çирĕплетрĕç. Паянхи кун çак пĕвере шыв шайĕ малтанхи пекех тăрать. Ялти халăх та кăмăллă. Пĕве вĕçĕнчи илемлĕ хăвалăх шывра. Çакăнта çĕнĕрен пулă ярса ĕрчетсен мĕн тери аван пулмалла! Пулă вăлча сапсан хур-кăвакал та хÿтлĕх тупĕ. Çапла пултăр тесен пĕр-икĕ çул пĕвере çынсене пулă тытма ирĕк памалла мар. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕн çирĕп йĕрке тумашкăн тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Йĕркене пăсакана штраф тÿлеттерес пирки хушу кăлармалла. Кирек кам пултăр вăл, анчах йĕркене пăхăнмасан ыттисем пекех яваплă тыттăр. Пулла çÿреме вара пирĕн тăрăхра пĕве пайтах.

Тепĕр ыйту канăç памасть. Пĕвери шыв шайне хăпартни лайăх. Çакăнпа пĕрлех малашне ăна таса тытасчĕ, унăн илемне упрасчĕ, çыран хĕррисене çÿп-çап тăкмалли вырăн тумалла мар. Хăшпĕрне, тен, хăнăхнă йăлла кăмăла каять. Анчах çак йĕркесĕрлĕхе пĕтермелле. Акă пирĕн "Спутник" урамра (вăл пысăк та мар) пурăнакансенчен çуррийĕ çÿп-çапа темиçе çул В.Огурцов хуçалăхĕн айккинчи кĕтесе, пĕве хĕрринех тăкать. Теприсем вара Н. Васильевăн кил хуçалăхĕн айккине вăркăнтараççĕ.

Тĕрĕссипе каласан ялти кашни урам вĕçĕ пирĕншĕн çÿп-çап тăкмалли полигон пулса кайрĕ. Ман шухăшпа вырăнти пуçлăх çынсенчен типтерлĕхшĕн çирĕп ыйтсан кăна йĕрке тума пулать.

**Вениамин СЕВЕРОВ.**
**Комсомольски районĕ, Аслă Çĕрпÿел ялĕ.**

◆ ЧУН КУ́ТНИПЕ

# Такăр çул вырăнне – пылчăк

Вăрнар районĕнчи Мăн Явăш ялĕнче çичĕ урам. Пирĕн урамра район центрĕнче вăй хуракан пĕр пуçлăх пурăнать. Унăн çурчĕ асфальт çулпа юнашарах темелле. Автобус чарăнăвне 200 метр кăна утса тухмалла. Çавăнпа йĕпе-сапара та пушмакĕ вараланмасть. Апла ыттисен терт-нушине те ăнланмасть.

2013 çулта вăл тăрăшнипех Воробьев урамĕнче çереме пăсса хăйăр сарчĕç, «çул турĕç». Халĕ кĕркунне-çуркунне урама пырса кĕреймĕн, çăрăлать кăна. Пĕлтĕр каллех грейдер урама çăрса пĕтерчĕ. «Виçĕ метр сарлакăш шоссе пулĕ», – тесе ляплантарчĕç пире вĕсем. Анчах тек ĕçĕ каймарĕ. Çуркунне чĕр нушаччĕ, атă кунчинчен шыв кĕрет, утма çук пылчăк. Çав çулпа çынсем тертленсе çÿрерĕç те.

Вут-кăвар тухасран е йывăр чирлесе ÿкесрен хăрасах тăратпăр, мĕншĕн тесен пĕр техника яла кĕреймĕ. Ял çыннисене пулăшас вырăнне сăтăр кăна тăвать пирĕн урамри пуçлăх. Такăр çул сарма-и, шурлăх вырăнĕ туса хучĕ. Хăçан йĕрке пулĕ-ши урамра?

**Анатолий ФЕДОРОВ.**
**Вăрнар районĕ, Мăн Явăш ялĕ.**

# Тăван килех туянмалла

Çак ыйту мана кăна мар, нумай çынна хумхантарнипе çыратăп.

Çурт-йĕре хамăр вăйпа лартрăмăр. Патшалăхран пĕр пус та илмен, пулăшакан пулман. Пурăнма кĕтес çавăрма хăтланса кашни пусне перекетленĕ. Ачасене сахăр чей ĕçмелĕх кăна панă. Çынсем пек чаплă та тăхăнса çÿреймен. Халĕ, кил хуçи вилсен, çурт-йĕре мăшăрĕн хăй çине укçа парса куçарттармалла. Апла çав çурта илме каллех укçа пухмалла. Кам шутласа кăларнă вăл саккуна? Тăван килех паянхи кун та тÿлесе илеймен-ха. Вăл çурта ывăлĕ амăшне лартса панă. Уншăн темиçе çул шахтăра тар тăкнă.

Кун пек тĕслĕх туллиех. Ватăсене ачисем кил-çурт çавăрса параççĕ. Вĕсем вилсен вара çав çуртах укçалла илмелле. Ĕлĕкрех вара тÿрех ачисене куçнă.

**М. ПЕТРОВА.**
**Вăрнар районĕ.**

# Арăш-пирĕш хаксем

Юлашки вăхăтра хаксем виçесĕр хăпарса пыни хăратать. Капла мĕн патне пырса тухăпăр?

Нумаях пулмасть Çĕнĕ Шелттем ялĕнчи медпункта «фламин» текен эмел туянма кайрăм. Куракĕнсенчен хатĕрленĕ эмел хакне каласан кĕçех йăванса каяттăм. Кĕске хушăра 236 тенке çитнĕ! Укçа çитменнипе илеймерĕм. Ăна ылтăнран туман вĕт, мĕншĕн çав тери хакланнă? Капла ĕлĕкхи пек эмел курăкĕпе сипленмелли çеç юлать. Шел, вĕсем те пур чиртен сыватаймаççĕ çав.

**Л. ВАСИЛЬЕВА.**
**Канаш районĕ.**

# Автобус çÿретесчĕ

Пире, Йĕпреç районĕнчи Костер ялĕнче пурăнакансене, çакă канăç памасть. Йĕпреç-Березовка маршрутпа автобус çÿрет. Аслă çултан Костер ялне çитме 2 çухрăм кăна темелле, анчах водительсем яла кĕресшĕн мар. «Çул ансăр», – яланах пĕр хурав вĕсен те, пуçлăхсен те.

Ватă çынсене, инвалидсене, пĕчĕк ачасемпе автобус чарăнăвне утса тухма йывăр. Нивушлĕ автобус маршрутне Костер ялне çитиччен тăсма çук?

Пире районти çулсем япăхни те пăшăрхантарать. Асфальт çулсемех шăтăкпутăк, çуркаланнă. Вĕсене юсасси пирки шутлаççĕ-ши пуçлăхсем?

**Костер ялĕнче пурăнакансем.**
**Йĕпреç районĕ.**

◆ АХРĂМ

# Ăçта-ши эсĕ, Санька?

Унтанпа шыв-шур самай юхса иртрĕ. Анчах курни-илтни паян та куç умĕнчех.

Сивĕ хĕл иртсе кайрĕ те аппапа пиччесем пÿртре лармаççĕ, ир-ирех урамра. Атте Сĕнтĕрвăрринче пурăнать. Эпир аннепе – Шĕнерпуçĕнче. Вĕçĕмех çиес килет. Урама кантăкран пăхса ларатăп. Артель правленийĕ умĕнче ял халăхĕ кĕпĕрленнĕ. Çурт тăррипе хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет. Вăйлă çилпе хĕрăмсен тутăрĕсем те халь-халь вĕçсе каясла варкăшаççĕ. Чÿрече хушăкĕнчен çил пÿрте вĕртет. Урамран купăс сасси илтĕнет. Мĕн уявлаççĕ çынсем? Çук, ăнланаймастăп. Юнашар анне те çук.

Пăхатăп, Санька арăмĕ пирĕн пата хыпалансах утать. Мана курсан чарăнчĕ, эпĕ ларакан чÿрече çине таянчĕ. Куçне шăлашăла илет хăй. Сасăсăр йĕрет. «Коля, вăрçă пĕтнĕ, – терĕ тытăнчăклăн вăл. – Вăрçă пĕтнĕ. Санька та килмеллеччĕ, çук, килеймерĕ, Петĕр те. Ăçта выртать-ши? Чунĕ вĕçет пулĕха ял çийĕн. Ачисем çине пăхать ĕнтĕ. Мишшана ярăнма йывăçран велосипед та туса панăччĕ. Ăна типтерлĕ тытнăшăн савăнать пулĕ. Петя та пысăкланчĕ, арçын пек, пĕтĕм ĕçе тăвать. Тоня хĕрне те куратех пулĕ çÿлтен. Эпир ăна мĕнле кĕтеттĕмĕр». Пичĕ тăрăх куççулĕ чарăнми юхать. Санька арăмĕн (ялти нек каласан) ачисем пуррине тинех пĕлтĕм. Вĕсен çурчĕ çĕнĕ урамра, ял вĕçĕнче.

– Ах, Коля, мĕнле пурăнмалла? Тĕлпулас шанăç та юлмарĕ. Вăрçă пынă чухне вăл таврăнас пек туйăнатчĕ. Халĕ тин çук ĕнтĕ. Мĕнле ăстаччĕ тата. Мĕнпур ĕçе тĕплĕ тăватчĕ. Ах, Санька, Санька, эпĕ кăна мар, ачусем те кĕтеççĕ сана. «Атте хăçан килет-ши?» – тесе ыйтаççĕ. Мĕн калас ман вĕсене, мĕн? Вил тăприне кайса курасчĕ, – пĕр чарăнми хÿхлет вăл.

Ăна итленĕ май алăк уçăлнă сасă хăлхана кĕчĕ. Санька арăмĕ сасăпах ÿлет. Ăна кура эпĕ те йĕрсе ятăм. «Коля, мĕн эсĕ макăрса ларатăн, савăнмалла, вăрçă пĕтнĕ», – терĕ анне тĕлĕнсе. Сасартăк унăн хавасла сасси шăпланчĕ. «Мĕн хурланатăн, ачана та йĕртетĕн?» – ыйтрĕ вăл Санька арăмне асăрхасан.

– Каçар Праски кин, сирĕншĕн уяв, вăрçă пĕтнĕ. Манăн Санька вара таврăнмĕ, – терĕ вăл нĕшĕклетсе.

– Санăн Саньку кăна мар, пин-пин ку вăрçăран таврăнмĕ. Малалли çинчен шутламалла, – терĕ хыттăн анне. – Кĕр пÿрте, пĕрле ларăпăр. Хуйхăна пĕччен чăтса иртерсе яма йывăр.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтерне чухне эпĕ тăваттăраччĕ. Пирĕн атте инвалид пулнă май вăрçа хутшăнайман. Вăл япăх курнă, илтнĕ. Анчах эпир те вăрçă çулĕсенче çинĕ-çимен пурăннă. Вăрçă ачисем пулнă эпир. Ял вăрман çумĕнчех вырнаçнăран кашкăрсем картишнех кĕрсе çÿретчĕç. Вăрман çимĕçĕ кăна пире выçса вилесрен хăтарнă.




**СĔНТЕРУ́: 70 ÇУЛ**

**Николай РИГОВ.**
**Сĕнтĕрвăрри районĕ, Анаткасси ялĕ.**

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунтикун, майăн 25-мĕшĕ**
7.00 «НАША РЕСПУБЛИКА. ГЛАВНАЯ ТЕМА» (12+)
7.30 «КИЛ ĂШШИ». (12+)
8.00 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (6+)
8.30 «IТ-НЕ ОБОЙТИ» (12+)
9.00 «ПЕРСОНА» (12+)
13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.15 «ЫЛТĂН ÇУ́ПÇЕРЕН» (6+)
19.30 «ПЕХИЛ» (12+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
20.45 «ПРОФИЛЬ ЗДОРОВЬЯ» (12+)
21.00 «СДЕЛАНО В ЧУВАШИИ» (12+)
21.30 «НАРСПИ». ТЕЛЕПОЭМА (12+)
22.00 «КИЛ ĂШШИ» (12+)

**Ытларикун, майăн 26-мĕшĕ**
7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ЫЛТĂН ÇУ́ПÇЕРЕН» (6+)
7.30 «ПЕХИЛ» (12+)
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
8.45 «ПРОФИЛЬ ЗДОРОВЬЯ» (12+)
9.00 «СДЕЛАНО В ЧУВАШИИ» (12+)
19.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.30 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
20.30 «НАША РЕСПУБЛИКА. ГЛАВНАЯ ТЕМА» (12+)
21.00 «БУМЕРАНГ» (12+)
21.30 «НАРСПИ». ТЕЛЕПОЭМА (12+)
22.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
22.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)

**Юнкун, майăн 27-мĕшĕ**
7.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15, 13.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
7.30 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
8.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «НАША РЕСПУБЛИКА. ГЛАВНАЯ ТЕМА» (12+)
9.00 «БУМЕРАНГ» (12+)
9.30 «НА ОЛИМПЕ» (12+)
19.15 «ÇАВРА СĔТЕЛ» (12+)
20.30 «СПОРТ ДЛЯ ВСЕХ» (12+)
20.45 «ТЕРРИТОРИЯ ЗАНЯТОСТИ» (12+)
21.00 «РАСПИСАНИРЕ ÇУК ПУЙĂС». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
21.30 «НАРСПИ». ТЕЛЕПОЭМА (12+)

**Кĕçнерникун, майăн 28-мĕшĕ**
7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ÇАВРА СĔТЕЛ» (12+)
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «СПОРТ ДЛЯ ВСЕХ» (12+)
8.45 «ТЕРРИТОРИЯ ЗАНЯТОСТИ» (12+)
9.00 «ВЕКТОР КОМФОРТА» (12+)
12.30 «НАША РЕСПУБЛИКА. ГЛАВНАЯ ТЕМА» (12+)
19.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.30 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
20.30 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)
20.45 «ЗАКОНОДАТЕЛИ» (12+)
21.15 «ОБ ЭТОМ ПОДРОБНЕЕ» (12+)
21.30 «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (12+)
22.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)

**Эрнекун, майăн 29-мĕшĕ**
7.00, 13.00, 16.00, 19.00, 22.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
7.30 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
8.00, 14.00, 17.00, 20.00, 23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)
9.00 «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (12+)
13.30 «НАША РЕСПУБЛИКА. ГЛАВНАЯ ТЕМА» (12+)
19.15 «ЮРĂ ÇАВРĂМĔ» (12+)
19.30 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (6+)
20.30 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (12+)
21.00 «IТ-НЕ ОБОЙТИ» (12+)
21.30 «ПЕРСОНА» (12+)

**Шăматкун, майăн 30-мĕшĕ**
7.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
7.15 «ЮРĂ ÇАВРĂМĔ» (12+)
7.30 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (6+)
8.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
8.30 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (12+)
9.00 «IТ-НЕ ОБОЙТИ» (12+)
9.30 «ПЕРСОНА» (12+)
10.30 «ФЛЕЙТĂПА КАЛАМАЛЛИ МАНĂÇА ТУХНĂ КĔВĔ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
13.00 «ЧĂВАШ ÇĔРĔН ЧИ ЛАЙĂХ ЮРРИСЕМ» (12+)
14.30 «НАША РЕСПУБЛИКА. ГЛАВНАЯ ТЕМА» (12+)
17.00 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
17.15 «ПРОФИЛЬ ЗДОРОВЬЯ» (12+)
17.30 «СДЕЛАНО В ЧУВАШИИ» (12+)
17.45 «СПОРТ ДЛЯ ВСЕХ» (12+)
18.00 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (12+)
18.30 «ПЕХИЛ» (12+)
19.00 «ЫРĂ КĂМĂЛПА». (12+)
19.30 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
20.00 «ÇАПЛА ПУЛТĂР!» (12+)

**Вырсарникун, майăн 31-мĕшĕ**
9.00 «ДАВИДПА СЕНДИ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
10.30 «ЖЕМЧУЖИНКИ ЧУВАШИИ – 2014» (12+)
13.30 «НАРСПИ». ТЕЛЕПОЭМА (12+)
18.00 «НАША РЕСПУБЛИКА. ГЛАВНАЯ ТЕМА» (12+)
18.30 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)
18.45 «ЗАКОНОДАТЕЛИ» (12+)
19.00 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (12+)
19.30 БУМЕРАНГ»
20.00 «ПЕРСОНА» (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Май, 20 – юнкун | Май, 21 – кĕçнерникун | Май, 22 – эрнекун | Май, 23 – шăматкун | Май, 24 – вырсарникун | Май, 25 – тунтикун | Май, 26 – ытларикун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 3.30 | 3.28 | 3.25 | 3.25 | 3.23 | 3.22 | 3.20 |
| | анать | 20.06 | 20.08 | 20.09 | 20.11 | 20.13 | 20.14 | 20.16 |
| Кун тăршшĕ | | 16.36 | 16.40 | 16.43 | 16.46 | 16.50 | 16.52 | 16.56 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунĕ | 3-мĕш кун | 4-мĕш кун | 5-мĕш кун | 6-мĕш кун | 7-мĕш кун | 8-мĕш кун | 9-мĕш кун |
| | (12 сехет тĕлне) | Йĕкĕреш паллинче | Рак паллинче | Рак паллинче | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Хĕр паллинче | Хĕр паллинче |

АСĂРХАНĂР!

# Чавса çывăх та...

**Çу кунĕсем çитнĕ май «хĕрлĕ автан» та хĕл ыйхинчен вăранчĕ пулас, çине-çинех авăтма тытăнчĕ. Инкек-синкек чылай чухне хамăр айăппах, вут-çулăмпа асăрханусăр пулнипе сиксе тухать. Çăмăлттайлăх хакла ларать, анчах чавса çывăх та çыртаймăн.**

### «Мунча кунĕ»

Канмалли кунсем пушар хуралĕшĕн «мунча кунĕ» темелле. Çак вăхăтра часчасах мунча сӳнтерме çула тухать.

Акă нумаях пулмасть Вăрмарти уйрăм çын хуçалăхĕнче ир-ирех мунча хыпса илнĕ. Пулăшу вăхăтра çитни кăна вут-çулăма сарăлма паман. Тĕпчев кĕçех айăплине те тупса палăртнă. «Хĕрлĕ автана» ирĕке яраканни – çиччĕри арçын ача. Кӳршĕре пурăнаканскер кил хуçисен 5 тата 3 çулсенчи ачисемпе выляна. Мечĕк хăвалаласа ывăнсан хайхи мунча çумне купаланă йывăç ешчĕксене вут тĕртнĕ. Шăрпăкне те пĕрлех чиксе çӳренĕ вăл. «Кирлĕ пулĕ», – тенĕ ĕнтĕ. Шел, аслисен унпа хăрушсăрлăх пирки калаçма, шăрпăка вăрттăнрах вырăна хума асаилмен курăнать. Халĕ тăкака ашшĕ-амăшĕн саплаштарма тивĕ.

Сĕнтĕрвăрринчи Пионер урамĕнче те ирхине ирех мунча кĕрлесе çуннă. Сăлтавĕ – электропралук юсавсăрри. Вуткăварăн çулне пӳличчен çулăм çурт тăррине, маччана сиенлеме ĕлкĕрнĕ. Тăвай районĕнчи Турикас Тушкилте те уйрăм хуçалăхра мунча кĕлленнĕ. Айăпли – 47 çулти кил хуçи. Арçын мунчине юсаса çĕнетме шутланă. Электропăчкăпа тимĕр каснă чухне хĕм хытах сирпĕннĕ. Анчах вăл чарăнман, хĕрсех ĕçленĕ. Сапакан хĕмрен пĕрене тĕлкĕме тытăннă. Типĕ йывăç кĕçех кĕрлесех çуннă. Çакна кĕтмен арçын çухалса кайнă.

Шупашкар районĕнчи «Хастар» сад коллективĕнче дача хуçисем мунча хутнă та кайса çухалнă. Хĕрсе кайнă мăрьерен йывăç стена самантрах тивсе илнĕ. Вĕри мунчара рехетленес вырăнне çынсен çулăма хирĕç кĕрешме тивнĕ.

Пушар Сĕнтĕрвăрринчи 51 çулти арçын хуралтисене те тĕп тунă. Малтанлăха палăртнă тăрăх – каллех мунча «айăплă-мĕн». Кăмакан майĕрине йĕркеллĕ туманнипе çулăм тухнă. Вăл çийĕнчех хуралтăсем çине сиксе ӳкнĕ. Пăрачкав районĕнчи Шадриха салара вĕри мунчара çăвăнма юратнипех ăна пĕр шелсĕр хутнă. Кăмака кăна мар, стена та хĕрсе кайнă, çунма пуçланă. Хуçисен милĕкпе çапăнасси пăчланнă.



### Тĕлкĕшет-ха типĕ курăк

Çиллĕ çанталăкра типĕ курăк, çӳп-çап çунтарни çулсерен пысăк сиен кӳрет. Вăрмана, пурлăха, çурт-йĕре самантрах кĕл тăвать. Кăçал та вăл Байкал, Амур тăрăхĕнче пысăк шар кăтартрĕ. Шел, хамăра инкек пырса çапмасăр та çăмăлттайлăх мĕнпе вĕçленнине ăнланса илейместпĕр пулас.

Çак кунсенче Элĕк районĕнчи Сурăм-варринче 57-ри арçыннăн лаççи çуланнă. Инкекĕн сăлтавĕ – кӳрши çуп-çап çунтарни.

Ку тĕслĕх вара Элĕк тăрăхĕнче сиксе тухнă. Прашкушкăнь ялĕнче вут-кăвар кил хуçи айăпĕпе алхаснă. Пахчара ĕçлекенскер чĕлĕмне сӳнтермесĕрех типĕ курăк çине пăрахнă та пăрăнса утнă. Тĕлкĕшекен чĕлĕмрен курăк, унтан сарай хыпса илнĕ.

Чĕлĕм туртнă чухне асăрханманнипех Етĕрне районĕнчи Мăн Чурашра гараж, хуралтăсем çуннă. Юрать, кӳршĕсен пурăнмалли çуртсене сыхласа хăварнă. Юсавсăр электропралук та хуçисене нимсĕр хăварать.

**Республикăра çулталăк пуçланнăранпа 383 пушар тухнă. Тăкак – 31,33 млн тенкĕ. Çулăмра 51 çын вилнĕ.**

### Пушартан сыхланма

Майăн 13-мĕшĕнчен Чăваш Енре пушартан сыхланма ятарлă режим кĕртнĕ. Çакă пушар хисепĕ ӳснипе тата лару-тăру çивĕчленнипе çыхăннă.

Чăваш Республикин гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ыйтăвĕсемпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн ертӳçи Вениамин Петров пĕлтернĕ тăрăх – кăçал çурхи-çуллахи вăхăтра типĕ те ăшă тăмалла. Çавăнпа пушар тухас хăрушлăх татах ӳсет. Çу енне çынсем вăрмана, парка ытларах çӳреме тытăнаççĕ. Вучах, çуп-çап куписене çунтараççĕ.

Çулталăк пуçланнăранпа Атăлçи федераци округĕнче те çине-çинех вут-çулăм алхаснă. Киров (27 хут), Пенза (22), Чĕмпĕр (18) облаçĕсенче, Мари (11), Мордва (11) республикисенче лару-тăру уйрăмах çивĕч. Хальлĕхе Чăваш Енпе Тутарстан Республикинче кăна çутçанталăк пушарĕнчен асăрханма май килнĕ.

Пушартан сыхланма ятарлă режим кĕртнĕ май вăрмансенче çӳреме, ĕçлеме, техникăпа кĕме вăхăтлăх чарнă. Инкеке сирсе яма ытти мера та йышăнаççĕ, çав шутра халăха вут-çулăма хирĕç кĕрешме явăçтарассипе те.

**Лариса НИКИТИНА.**

АХ, АНЧАХ...

## Тĕрĕслĕхе тĕпе хурса ĕçлемелле

Коррупци çулне пӳлес тĕлĕшпе палăртнă йĕркене патшалăх службинче тăрăшакансем мĕнле пăхăнса пынине республикăра тĕрĕслесех тăраççĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕн Администрацийĕ тупса палăртнă пилĕк тĕслĕхпе 4 çынна дисциплина тĕлĕшĕнчен явап тыттарнă.

Тепĕр тăватă çын тĕлĕшпе хальхи вăхăтра тĕрĕслев пырать. Республика Пуçлăхĕн Администрацийĕ вĕсем хуçалăх объекчĕсене ертсе пырас ĕçе хутшăнманнине пĕлесшĕн. Патшалăх служащийĕсенчен пĕри кунашкал тĕслĕх тăрă шыв çине тухсан хăйне ĕçрен хăтарма ыйтнă.

Кунсăр пуçне республика ертӳçин администрацийĕ кăçалхи март-апрель уйăхĕсенче патшалăх органĕн пилĕк тытăмĕнче служащисем граждан службин саккунне мĕнле пăхăннине тĕрĕсленĕ. 31 çын тĕлĕшпе хушма тĕрĕслев мероприятийĕсем йĕркелеме хистекен тĕслĕхсем (банкри тата ытти кредит организацийĕсенчи счетсене тĕрĕс мар кăтартни, тупăш виçине туллин палăртманни, акцисем пуррине пĕлтерменни тата ытти те) тупса палăртнă.

## Тырă вырăнне – наркотик

Республикăри пĕр агрофирма менеджерĕ уй-хирте тырă вырăнне кантăр ӳстерме шутланă. Пĕлтĕр çуракинче хуçалăхăн Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар районĕсенчи лаптăкĕсенче кантăр акса хăварнă. Кĕрчченех ӳсен-тăрана пăхса тăнă, удобренипе апатлантарнă. Кантăртан пысăк тухăç илессе иккĕленмен арçын. Кайран ăна сутса услам илме ĕмĕтленнĕ. Хушшăн-хушшăн кантăр тăррине касса типĕтнĕ – пахалăхне тĕрĕсленĕ-ши?

Кĕр енне кантăр вăрман пек кашласа ларнă. Оперативлă шырав ушкăнĕ йĕр çине ӳкиччен менеджер 4 килограма яхăн марихуан пуçтарса сутма ĕлкĕрнĕ.

Ăна тытса чарсан хваттерĕнче те, кĕсйинче те марихуан тупнă. Вăрттăн плантацире ӳсен-тăран самай пуçтарса илнĕ. Менеджер çулне пӳлмен пулсан наркотик хатĕрлекен цех та уçĕччĕ-и? Айăплине суд тенкелĕ çине лартнă ĕнтĕ.

Çакă тĕлĕнтерет: уй-хирте тырăпа юнашарах кантăр ашкăрса ларнине хуçалăх ĕçченĕсем те асăрхаман-ши?

## Шăллĕне вĕлернĕ

Ыррине, лайăххине хăвăрт хăнăхатпăр çав. «Унсăрăн мĕнле пурăннă-ши?» – тĕлĕнетпĕр кайран. Чăн та, компьютер пурнăçа, ĕçе-хĕле палăрмаллах çăмăллатрĕ. Шел, виртуаллă тĕнче çамрăксене капкăнах çаклатрĕ. Вĕсем компьютер умĕнчен хăпма пĕлмеççĕ темелле. Çĕрĕ-çĕрĕпе выляса ларакансем те пайтах. Çамрăксен çирĕпленсе çитеймен ăс-тăнĕ куç умĕнчех улшăнни сисĕнет. Виртуаллă тĕнчере «пурăнакансскерсем» хăйсем мĕн хăтланнине те ăнланмаççĕ-тĕр. Нумаях пулмасть сиксе тухнă хăрушă инкек çакна çирĕплетет те.

Шупашкарти пĕр шкулта тăххăрмĕш класра вĕренекен арçын ача çĕрĕпех компьютерпа выляса ларнă. Ирхине пилĕк сехет тĕлне тин унран хăпнă. Анчах çывăрма выртас вырăнне пӳлĕмре лăпкăн тĕлĕрекен шăллĕне çĕçĕпе чиксе пĕтернĕ. Çывăх тăванĕ ăна виртуаллă тĕнчери тăшман пек курăна пуçланă-ши? Юнашар пӳлĕмре çывăракан ашшĕпе амăшĕ инкеке сиссе ĕлкĕреймен, сирсе ярайман. Сăмах май, маларах пĕр çамрăк арçын çĕрĕ-çĕрĕпе вылянипе компьютер умĕнчех вилсе выртнăччĕ.

ÇЫРĂНТАРУ – 2015

### Хисеплĕ вулакансем! Шута илĕр: АКЦИ!

## Май, 14–23

**«Хыпар» Издательство çурчĕн хаçат-журналне 2015-мĕш çулăн иккĕмĕш çурринче илсе тăмашкăн йӳнĕ хакпа çырăнтараççĕ.**

***Васкăр, юратнă кăларăмсене йӳнĕлле çырăнса юлăр!***

| Кăларăмсем | Индекс | Майăн 14-23-мĕшĕсенче | Майăн 24-мĕшĕнчен | Перекет |
|---|---|---|---|---|
| Хыпар | В4800 | 725,46 | 798,06 | 72,60 |
| Хыпар-эрнекун | В8353 | 315,48 | 345,54 | 30,06 |
| Çамрăксен хаçачĕ | В4804 | 366,78 | 399,54 | 32,76 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | В1515 | 331,68 | 360,66 | 28,98 |
| Сывлăх | В1524 | 210,06 | 228,90 | 18,84 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | В4806 | 187,44 | 203,70 | 16,26 |
| Хресчен сасси | В4838 | 273,72 | 297,78 | 24,06 |
| Тăван Атăл | В1529 | 308,28 | 331,50 | 23,22 |
| Капкăн | В4608 | 155,70 | 166,98 | 11,28 |
| ЛИК | В3429 | 135,06 | 144,50 | 9,44 |
| Вести Чувашии | В4807 | 302,22 | 327,78 | 25,56 |
| Собрание законодательства ЧР | В4847 | 713,88 | 761,52 | 47,64 |
| Тантăш | В4802 | 250,92 | 273,78 | 22,86 |
| Самант | В3208 | 174,54 | 187,26 | 12,72 |
| Тетте | В3771 | 138,60 | 148,98 | 10,38 |

«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви,
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин
«Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – В.В. ТУРКАЙ
Редакторшăн Л.А. Никитина
РЕДКОЛЛЕГИ:
В.В. Петрова – редактор
И.П. Никитина – корреспондент
Л.А. Никитина – корреспондент
Е.А. Трофимова – хаçат операторĕ

www.hypar.ru,
e-mail: hreschen@cbx.ru
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем:
директор-тĕп редактор – 56-00-67,
пайсем – 62-50-06, 62-04-54,
реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70.
Факс (8352) 62-50-06

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан служби Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 1874
Тираж 3384

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.